„Канаш“ хаçат сумĕнҫетухахӗ

# КАПКĂН

16-мĕш №

Çентапĕршĕн, 1926 ç. 2-мĕш çул тухаҭ.

## АВĂН ÇАПНĂ ÇĔРТЕ.



— Сăрăм тулнă-иç. Ма тата йăтса килен?

— Çанталăк уйăр тухне хаерах çапса пĕтерес тетĕп. Епĕ 14-мĕш страницăри çынсем пек мар...

*(14-мĕш страницăра çапнă фелйеттона вуласа пăх).*

# Ҫейе сутйе.

## (Проккураттурӑ вађђи ҫырнӑ халап).

Халап хапха тӑрринҫе,
Йумах йупа тӑрринҫе.
Халап пуҫламӑшӗ.

Иетӗрне уйесӗнђи Штанаш вӑрманӗ таврашӗнҫе пурӑнаҭ тет пӗр халӑх сут йи. Хушамаҫӗ унӑн Йеремейӗв, тет. Ҫак Иеремейӗв сутйен ҫурт лартас килнӗ, тет. Ҫурт лартас пулсан, сывлӑшран тума ҫук вӗт, ӑна хӑвӑрта пӗлетӗр. Ҫавӑнпа Иеремейӗв сутйен ҫурт лартма маттерйалсем шырэмалла пулнӑ, тет. Ђул ҫурт лартма Иеремейӗв пултарайман, тет, ҫуртне йӑвӑҫранах лартмалла пулнӑ, тет. Йӑвӑҫӗ Штанаш таврашӗнҫе нумай ӗнтӗ. Анђах ӑна питӗ хытӑ сыхлаҫҫӗ, тет. Халӑх сутйи вӑрман тавра тилӗ иҫӗм ҫырли тавра ҫӳренӗ пек каркаланса ҫӳресен те йӑвӑҫ илеймест, тет. Торки тенисем иртнӗ, тет, плансӑр-мӗнсӗр пама йӗрке пӗтнӗ, тет. Мӗн тӑвас? Халӑх сутйи ҫуртне тума платниксем те килӗшнӗ тет, пӗр йӑвӑҫҫи ҫукки ҫеҫ ӗҫе ђараҭ, тет. Тытӑнаҭ тет сутйе когексӑсене пӑхма. Ҫӗрӗн кунӗн вулаҭ тет когексӑсене пӑхса Иалан вӑрман илес ӗҫе шыраҭ, тег. Ҫиђ талӑк иртсен, сутйе тупаҭ, тег, хӑйне кирлине. Илет, тет, шурӑ хуг, тытаҭ, тет, ылтӑн руђкӑ, ҫыраҭ, тет, вӑрман сыхлакансен ђи аслӑ пуҫлӑхне (леҫниђђине) ҫыру. Ҫырунe хӑйех илсе кайаҭ тет леҫниђђи патне, анђах леҫниђђине кӗтсе илеймесӗр, тепӗр ҫыру ҫырса хӑвараҭ, тег.

Кумашка вӑрман пуҫлӑхне.
Епӗ виҫҫӗмӗш уђасткӑри Иетӗрне уйесӗнђи халӑх сутйи; сирӗн пата пӗр ӗҫпе килтӗм, леҫниђђӗствӑпа халӑх суђӗ ҫыхӑнса тӑрсан, ӗҫсем ӗлекхинђен маларах кайӗҫ.
Халӑх сутйи Иеремейӗв.

Кун хыҫҫӑн тата ҫыраҭ, тет. Ҫырӑвӗ ҫапла, тет:

Кумашка вӑрман пуҫлӑхне.
Ман хађ ҫургйӗр йусакан платниксем пур, анђах пӗр 15 пӗрене ҫитмест, ҫавӑнпа епӗ ӗҫ ђаранса ан тӑтӑр, тесе мана ҫеквестӑр тунӑ йӑвӑҫсене пама ыйтап. Ун пек йӑвӑҫсем сирӗн 21-мӗш квартталта пур. 15-рен кайа кирлӗ мар, тата тӗпрен касни кирлӗ
Н. Иеремейӗв, тесе алӑ пуснӑ.

Вӑрман сыхлаканӗ сутйене вӑрман парӑп, тет Анђак, ҫинӗ вӑкӑгра аппеггит кӗрсе пыраҭ, тенӗ пек сутйен те ҫавӑн пек пулнӑ, тет. Татах вӑрман ыйтаҭ, тет. Ҫырупа ыйтаҭ тет. Ҫырунe арӑмӗпе йараҭ, тег.

Иуратнӑ Сакконӑв! Тилмӗрсех ыйтатӑп, ман арӑма итлесе вӑл ыйтнине памашкӑн. Ӗҫӗ ҫапла ӗнтӗ, ак хађ пирӗн кил ҫурт йусама.. Йӑвӑҫ ҫи тет пуђ, тесе, ҫапах ҫитмерӗ. 4 пӗрене 15 аршӑнли кирлӗ... Саккон таврашсӑрах пама ыйтап... Пулман ӗҫ пирӗншӗн ҫук; ҫавна тусан, малашне тархаслӑп. Сана хисеп тусах йулап.
Халӑх сутйи Иеремейӗв.

Ку ҫырӑва илсен, леҫниђђи Сакконӑв хӑраса ӳкег, тет. Виҫ кун ҫимесӗр-ӗҫмесӗр ђирлӗ пулаҭ, тет. Ҫапах йӑвӑҫне пама калаҭ, тет. Хуллен хӑракаласа халӑх сутйине: пӑртак йӑвӑшмастӑн ши есӗ, тесе пӗлтерет, тет. Иурамарӗ, тет, вара халӑх сутйине, ӗрӗхсех кайрӗ, тет. Хирӗҫ ҫыраҭ тет вӑрман пуҫлӑхне:

Иулташ Сакконӑв. Ман ыйтусем пурте сакконлӑ. Еп пӗрте хам сутйе пиркипе усал ӗҫсем тӑвасшӑн мар; хађхи ман ыйту та сакконлӑ, ҫӑл (тарасс) путса аваҭ, ун тӑрӑх Ф. Иеремейӗв та (шӑлнӗ пулас) калама пултараҭ. Есӗр тата хађ те йӑвӑҫ памасан, епӗ пурне те аса илсе урӑхла шаккаса пӑхӑп, хам правасене кӑтартса. А. Ҫитӑрӑв вађђи пур, мана ҫук. Кайалла ҫыр. Кайалла ҫырмасан, сопранисенҫе тупӑпӑр. Иеремейӗв.

Вӑрман пуҫлӑхне сутйе сопранире

# Кутӑнла ҫаӑпӑркка.

Кӗркунне мӗн пулмасӗ. Кӗркунне темӗн те пулать. Например калас, йӑвӑҫ ҫулҫисем сарӑла пуҫлаҫҫӗ те, ҫӗрелле вӗҫкӗнеҫҫӗ. Хӑш-хӑш кооператив лавккисенҫе арпуссем ҫӗрсех выртаҫҫӗ, мӗншӗн тесен шурӑ арпуса (шурӑ арпус хӗрлӗ арпусран нумай йӳнӗрех) ҫӑвашсем йуратсах каймаҫҫӗ. Карҫӑксем ҫанталӑк сивӗрех тӑнипе, кусӗсем тӗтрелеһнӗ пулсан та, майӑрпа кӑмпа татмасӑр йулнӑран калама ҫук ӳпкелевеҫҫӗ. Уҫшуҫсем. Улшуҫсенех урӑх шухӑш. Ыран-пайан лаша пасарӗ вӑйлӑланасса ҫывӑрмасӑрах кетеҫҫӗ. саппас кутӑнла ҫаӑпӑрккасем (пушӑ) йавса хатӗрлеҫҫӗ.

Кутӑнла пушӑ ӗлӗк-авал лашасене анҫах хавшаклатма пултарнӑ. Кутӑнла пуша „Капкӑн" халӗ урӑх ӗҫе пама май тупасшӑн; совет ирӗкӗпе „Капкӑн" урлӑ мӗн пур кӗрхи йӗксӗксене тӳрлетме.

Ак, например калас, Шупашкар вулӑсӗнҫи Ҫӗнйалти пуштӑ ҫахӑмланӑ. Ҫав пуштӑра Шахматтӑв ӗҫлет пулас. Ҫахӑм ҫирне ку таранҫен те етеме йернине илтмен-ха. Ҫахӑм ҫирӗн хурҫӗсем ункӑн-ункӑн йавкаланса ҫӳреҫҫӗ. Асгумасан сыхламасан кӗрик кама та йерме пултараҫҫӗ. Ҫахӑм ҫирӗ—питӗ хӑрушӑ ҫир, вӑл калама ҫук вӑйлӑ сийенсем кӳрет.

Например калас, есӗ Шупашкарта уҫрештенинҫе ӗҫлетӗн. Санӑн Йалӑмкас вулӗҫтӑвкомне ӗҫсырувӗ йамалла. Йалӑмкасси вулӗҫтӑвкомӗ Шупашкарган 15 ҫухрӑм. Есӗ шухӑшланипе ҫыру ик-виҫ сехетрен персе ҫитмелле. Анҫах Ҫӗнйал пуштинҫе Шахматтӑв ҫахӑм ҫирне асаплӑннӑран есӗ йанӑ ҫыру 480 сехетрен кӑна персе ҫитет. Ҫав кунах есӗ Шупашкаргаң Мускава ҫыру йанӑ пултӑр. Ҫав ҫыру вӑл васкан х вӗҫкӗнсен те, ҫахӑм ҫирлӗ пӑштовойсене тӗл пулсассӑн, ик-виҫ ҫулран Мускава персе ҫитетех.

Например калас, сан хурӑнташу Мускава Хӗрлӗ ҫара кӑҫал кайнӑ пултӑр. Есӗ ун патне хыҫранах поссылккӑ йанӑ пултӑр. Есӗ ан хӑра, сан поссылку ҫӗтесрен. Сан хурӑнташу ҫав поссылккӑна, пур пӑштовойсене те ҫахӑм ҫирӗ йернӗ пулсан та, илетех. Анҫах вӑл салтак службине вӑл вӑхӑтра пӗтерет, киле тавӑрнса авланаӗ, ҫулталӑк та ҫурӑ ҫулхи аҫи п у л м а пултараӗ.

Ирлашки вӑхӑтра «Капкӑн» професҫӑрӗсем ҫахӑм ҫирӗпе кӗрешес йенҫен питӗ хытӑ ӗҫлерӗҫ. Ҫахӑм ҫирне тӳрлетмелли емеле халӗ пӗр Шупашкарти пасар вырӗвӗҫи ҫуртра кӑна параҫҫӗ. Ҫав ҫурта—Ҫӑваш Аслӑ ҫуҫӗ, теҫҫӗ. Унта паракан емеле—«Капкӑн» кутӑнла ҫаӑпӑркки, теҫҫӗ. Снаҫӑт, ҫахӑм ҫирне тӳрлетме пӗр кутӑнла пушӑ кӑна пултараӗ. Ҫӗн-йал пуштинҫе ӗҫлекен ҫахӑмҫӑ Шахмӑтӑва та кутӑнла пушӑ тӳрлетессе «Капкӑн» вулаканӗсем шанаҫҫӗ.

ИРЕНЕИ.

---

те тупнӑ, те тупман, те „прависене" кӑтартнӑ, те кӑтартман, пӗлместпӗр ӑна. Анҫах ҫакӑн пек саппискӑсемпе 11 ҫурӑ куп вӑрман илсе ҫурт тунине аванах пӗлетпӗр...

Ҫапла ҫейе сутйе, кстексӑсене вуласа ӑс-пуҫ пухса саппискӑсемпех ҫурт туса лартаӗ, тет. Халӑх сутйи Иеремейӗв хаҫ те сутйере пурӑнаӗ, тет. Мӗнле пурӑнас мар, ҫурт лайӑх, хак ла ӳмен, котексӑсене пӗлет. Еп те ун патӗнҫе пӗрре пултӑм, вӑл сут тунине куртӑм. Хайар сут тӑваӗ, шеремет.

ХАЛИЛАВ.

---

## Н а й а н.

(Ҫӑн пулнӑ)

Мӗкӗте: Ес, Павӑл, ма пайан ӗҫлеместӗн?

Павӑл: Мана, витепе хупса лартса питӗрҫӗҫ, алӑкне тургрӑм, вийепле те уҫаймарӑм.

Мӗкӗте: Павӑл ес суйатӑн, сана шалтан питӗрнӗ вӗт.

Павӑл: Шалтан питӗрнӗ ҫав, сана калап вӗт.

Павӑлӗ ӗҫленӗ ҫӗртен витене кӗкӗ, шалтан хӑйех питӗрнӗ.

(Ылттӑн руҫкӑ).

# Урӑх йышши Тарвинсем.

Ӗлӗк Тарвин йатлӑ вӗреннӗ ҫын, ҫӗр ҫинҭи тӗрлӗ тӗслӗ кайӑксем, выђӑхсем ӑҫтан тухса кайнине пӗлесшӗн килӗнҭе тем тӗслӗ кайӑк усраса пӑхнӑ. Тарвин пӗр кӑвакарҫӑн ӑрӑвӗнҭен темиҫе тӗслӗ те туса йанӑ. Ҫак тӗссене тупмашкӑн, Тарвин малтанхи кӑвакарҫӑн мӑшӑрсен ҭӗппиcене, мӑнӑрах сӑмсаллисене хӑйсене мӑшӑр, ыттисене хӑйсене мӑшӑр туса усранӑ. Вӗсен ҭӗппиcене каллех ҫавӑн пек суйласа усраса, 6-7 сыпӑк иртсен ҫапла суйласа усранӑ кӑвакарҫӑнсене, хӑйсен ӗлӗкхи кӑвакарҫӑнсемпе танаштарсан палла малла мар кайӑк йевӗрлӗ пулса кайнӑ.

Ун пек пӗр йышши выђӑхран тепӗр йышши тӑвакансем пирӗн ҭӑваш хушшинҭе те пур, ҭылай. Анҭах вӗсем, Тарвин пек суйласа мар, ҫитерсе те мар, патакпа, выҫӑпа урӑх йевӗрлӗ туса йараҫҫӗ.

Ҫавӑн пек Тарвинсем Уйкас-Ианасалта (Шӑмат вул.) Макар таврашӗсем пур. Макарӑн 3-4 аҭи мыттар тӑваҫҫӗ. Тем тӗрлӗ выђӑх илсе сутаҫҫӗ. Нимрен ытла утсемпе, йӑтӑсемпе хӑтланаҫҫӗ.

Пӗрре ман лаша ытла ҭуман пирки сутас тесе ҫавар уҫрӑм. Таҫтан илтнӗ, Макарӑн Хӗветӗрӗ пыҭӗ кӗҭӗ те ман лашана илҭӗ пӑрахрӗ. Укҫи татӑклӑ ҫумӗнҭе ҫуккипе, мана килне илсе карӗҫ. Епӗр ҫитсенех пырса кӗреҫ: Макарӑн Михали, Елевекӗ, Ваҭукӗ, Тапратрӗҫ пуплеме, таҫта та ҫитеҫҫӗ, ҫынна улталаси, утсене шухлатни, ахађ йытӑран вӗшле туни ҫинҭен.

Ваҭукӗ мана, эсӗн йытӑ ҫуки сутлӑх? тет.

— Пустай вӗшле мар йытта йепле сутан, тата есӗ пур йӑтӑпа мӗн тӑван, терӗм. Пур те шулӗксем пек мана каласма та ирӗк памаҫҫӗ, хӑйсем анҭах пуплеҫҫӗ.

— Ийа, йӑтти усӑ парат̆ех вӑл, теҫҫӗ.

— Иытӑ йытах, ӑҫтан тухтӑр ун усси, тетӗп.

— Кӑҫал мӗн вӗшле илсе йытӑ туса сутрӑм. Йытӑсене тепӗр ҫӗрте ахалех илсе тухатпӑр. Пӗр уйӑх майлӑ, латлӑ ҫитеретпӗр. Хырӑмӗсенҭен пирпе туртса ҫыхатпӑр. Хӑйӗн навусне кӑларса виҫҫӗ ҫийеҭҭен усрасан ахађ йытӑранах вӗшле пулат̆ Вара йун пасарне кайса тутарсене 7-8 тенке сутатпӑр. Тутарсем пасарта курсанах «Ваҭук мӗшле,“ теҫҫӗ анҭах. Тепре пасара аннӑ ҫӗре, ҫав йытӑсем апсем ҫитерни пе шамма хырӑмланса кайаҫҫӗ, тет Ваҭук

— Ну ӗҫетпӗр пуђ мӑкриҭине, анҭах уҭӗ ҭуман пулҭӗ-ха, тет Хӗветӗрӗ. Ӗҫкӗ те тапранҭӗ.

— Е, пӗлӗпӗр кӑна, ӳҭӗ-тирӗ ҫитмелле ха, тет Елекен.

— Астӑватра, ман пӗр шур лаша ҭахӑмҫӑскер пурҭӗ. Пӗрре ҫӗрле тухса карӑм та, Еҫкӗлiӗк варӗ тӗлӗнҭе, рыҭакпа илтӗм анҭах. Лаша кайрӗ ӳкрӗ. Тӑрсан киле илсе карӑм та ир ҫинҭенех сутса йатӑм. Ир тӗрре кӑшкӑрсан ман лаша тапӑртатса анҭах тӑрат̆. Сутнӑ ҫӗрте ман лаша нумай та пурӑнмарӗ—вилҭӗ, тет Михалӗ кукша пуҫне ҫутӑлтарса.

— Вилин, укҫине илсе пултӑр. Выђӑха хӗрхенсен тупӑш ӑҫтан пулат̆. Ман хӑш утӑн айак пӗрҭисем пӳрнепе те тӗкмелле мар хӑпарса тухаҫҫӗ. Пӑралукпа йавнӑ пушӑ вӗрентет. Хӗветӗрпе иккӗн пӗр лашана картана хупрӑмӑр та йӑк-йӑк анҭах сикекен турӑмӑр. Ҭӗр туйасемех ванса пӗтеҫҫӗ, тет Елекӗнӗ.

— Ку та вӗренмелле, ҭӑтмалла, тупӑш памаллах. Патак курсан шухланат̆, аларӑн кайсан укҫине илсен вилсен те шалккӑ мар. Куя аллинҭе сӳс пушӑ та лайӑххӑн курман пулӗ-ха, терӗҫ мана кӑтаргса.

Ӗҫкелесен хам лаша укҫине аран илсе тухса кайрӑм, Пур ӗҫ ҭӑвашӑн та Тарвинсем. Ытти мыттарсен аллинҭе лашасем шух. Пырат̆ выђӑхӗ ҭӗлхеллӗ мар. Ҭӗлхеллӗ пулсан сут айӗнҭен тухас ҫук ку Макар таврашсем, тата ытти мыттарсем. Мыттар таврашӗнҭен выђӑх тавраш илмелле ан пултӑрах.

ИӖП.—Ҭ.

## Çверхуроҫнă ĕçлеме пухăннăскерсем.

(Шупашкарти пĕр аслă копператтивра)



— Мĕнле кэмпани иптерессн çинҫен канашлама пухăннă ку инструктăрсем? Хĕрӳллĕн сăмахлаççĕ, тавлашаççĕ, тайкаланаççĕ.

— Тухса кайакан Суххăв йатлă пухалтĕра ăсатаççĕ. Ăсатнă çĕрте сухха (типĕ) он пултăр тесе, карлаккисене йĕпетнĕ.

## Сута лектерҫĕç.

Епĕ хутла пĕлменнисемпе кĕрешес тĕлĕшпе йатарсах «Хутла пĕлменнисем пĕтҫĕр» тийекен ушкăна кĕтĕм. Çав ушкăнта ĕнтĕ ҫэен укçи сапласа çур çула йахăн пурăнатăп. Çав çур çул хушшинҫе манăн, уйăхне 5-шер пус тӳлесе 30 пус укçа пĕтрĕ. Хам никампа та кĕрешсе пăхаймарăм.

Хаҫ нумайах та пулмасť пирĕн йалта ҫиркӳ праçникне уйавларĕç. Ĕçкелерĕç. Епĕ те кăшт пуçа уоса çӳремеллĕх сыпкаларăм.

Каçалапа урама тухрăм. Куратăп, мана хирĕç пĕр ăстарик килет. Ӳсĕр. Епĕ те çавах.

— Как шивйош, Михаил Çтепанҫă, тетĕп.

— Н-виҫаво, хаҫ лайăх, х хо хорошо пурăнатăп, тет.

Епĕ тӳрех, вырăсла питех пултарайманнине кура, ку хутла пĕлменнине ăсгуса илтĕм. А, ман кунпа кĕрешес пулатиç, тесе шухăш кĕрсе кайрĕ.

Иарса тытрăм та çынна, пĕррех çавăрса çапрăм. Тата, усалах пырса хунă пулĕ, инçех мар пĕр патак вырта парať. Çав патака илсе, старике хĕне пăрах. Латнă, çынсем пырса ҫарҫĕç, а ту пулсан вĕлерсех пăрахап-ҫĕ.

Ну мĕн тата, старик хвершăл патне кайнă, свитетелсвă тутарнă, кайран сута панă. Сут мана пĕр çулталăк хупмалла турĕ.

Каларăм сутйине: Епĕ хутла пĕлмен çынсемпе кĕрешекен ушкăнта ҫлента тăратăп, вăл ăстарикпе çавăн пирки кĕрешрĕм, тесе. Сутйă кăлт та внимани илмерĕ. Кайран Аслă Сута касатси патăм, вăл та ним те тумарĕ. Хаҫ ĕнтĕ тем тăвас? Такама шалăпă парас.

САНҪАС.

# Ватă пуп, „йашланҫĕ“.

(Вырăсла майлă).

Тимушкка пуп тĕлĕнмелле ҫын. Тĕлĕнмелле кăна мар, шалт тĕлĕнсе хытсах каймалла! 78 ҫул ĕнтĕ вăл амăшĕ аҫнĕнҫен тухса мĕшĕлтетме пуҫлани!

Ҫак Тимушкка пуп турă пирки тавлашма питĕ те хатĕр. Турăшăн тавлашас пулсан вара вăл, 78 ҫулта пулин те, сарай урлă сиксе каҫма хатĕр.

Турă пуррипе ҫукки ҫинҫен пĕрре ҫак Тимукха пуп хулари тухтăрпа тавлашса кайнă.

Турă, ейпох та, пур, тесе тавлашаҭ, пуп Тимушка.

— Ҫук, пулма пултараймасҭ, пулман та вăл, нихҫан та пулас ҫук, тет тухтăрĕ.

— Хоспоти пошĕ мой... Ара турă пулмасан тĕнҫе мĕнле тытăнса тăма пултараҭ?...

— Апла пулсан тавай тавлашар, есĕ турă йаҫĕпе, епĕ хам ҫине шанса. Епĕ сана хаҫ ҫамрăклатма пултаратăп, тет тухтăрĕ.

— Ҫук, турăсăр пуҫсăр никама та ҫамрăклатма пултаримастăн...

— Пултаратăп, ыран хакриш килиҫнех апат ҫи те, пыр ман патăма, тет тухтăр пупа.

Иураҭ, килĕшрĕҫ.

Тепĕр кунхине Тимукха пуп ирех тăҫĕ те тухтăр патне йашлавас шутпа ута паҫĕ. Тухтăр пупа хăй патне питĕ аван йышăнҫĕ.

— Ну ҫăн ҫăнах йашланма шутлатăн-и, Тимошкă?

— Ара ҫăя, анҫах ку турă ĕҫĕ... есĕ нийепле те мана 78 ҫулхи ҫынна йашлатма пултаримастăн...

— Сана ҫак вăхăтрах, йе пăртак тăхтарах йашлатас? —тет тухтăрĕ.

— Халех, ҫас йашлат. Йашлатаймасан 30 тенкĕ укҫа паратăн, анҫах йашлатсан вара епĕ 50 тенкĕ пама та хатĕр. Анҫах турăсăр ҫынна йашлатма май ҫукках, тене пупĕ.

* * *

Тăват пилĕк минутран тухтăр пĕр путылкка тулли емел йатса тухрĕ те, пупа ҫапла ăс парса йаҫĕ:

— Киле ҫитсен, лайăх апат ҫисе тăраннă хыҫҫăн ҫак путылкка ҫинҫи емеле ним сывламасăр ĕҫсе йамалла вара. терĕ.

Хайхи пуп киле ҫитсен тăраниҫҫен апат ҫисе тултарҫĕ те, путылкка ҫинҫи емеле ним сывламасăр ĕҫсе йаҫĕ.

Пĕр ик минут тăрсанах пуп хырăмҫе кăшкăрма, пакăргаттарма тапратрĕҫ.

Унтан тула. Шалтан хăваланипе, пуп картана ҫитни сисĕнмест. Йăртйăрт анҫах тăваҭ. Анҫах тултан пӳрте кĕрет. пуп, каллех тула тухас киккипе, сиккипе картаналла ҫатăлтаттараҭ.

* * *

Пуп матăшки, супĕ ҫапла кăтланнине (тенех тула, картана ҫупнине) тийаккăн патĕнҫен тавăрăнсанах сисрĕ.

Ара мĕн хăтланатăн есе, Тимошкă, тет. тула ҫупатăн... тилпĕрен вăрри ҫирĕн-и мĕн?

— Фу ту-турак... Тилпĕрен вăрри» тет, Йашлантăм, тет те пупĕ сăмахне каласа пĕтернĕ пĕтермен сиккипе, йăпăр йапăр картаналла вĕстерет. Паҫăшкă майри пупăн ĕҫĕ ҫинҫен тĕплĕрех пĕлес тесе хыҫҫăн тула тухрĕ.

— Ара мĕн есĕ хăтланан, Тимошка?..

— Тухтăр йашлатрĕ, пайан тавлашрăмăр епир унпа турă йаҫĕпе...

Ҫапла пуп, матăшкине тăнлантарнă хыҫҫăн, пуп мĕн пирки питĕ ҫивĕҫленсе (йăланса) кайвине матăшки ҫасах ăнран илҫĕ. Ăна йашлантармалли емел —супăҥ шывĕ пулнă мĕн.

Ҫакăн пек ухмаланнивҫен пуп майри тĕлĕнсе хытсах кайнă тата.

— Ах ты турак, полван, стари пйус.. Ҫавна пĕлместĕн, тет пуп майри. Ҫилленнипе ҫапмах тăраҭ—Тимошкине...

— А мĕн тăвас тетĕн... каллех турă йаҫĕпе, тесе каллех картана ҫупаҭ.

Ҫапла пирĕн Тимушкă пуп супăҥ шывĕпе, турă йаҫĕпе 3 кун кунĕпе йашланса пурăнҫĕ.

Пĕлтĕри, вулакансем, Тимошкă пуп ҫийĕнҫен!?

АТТАИ М.

# Тăванпа тăван.

Çак калаçува еп пиг тĕрĕс çырса пынă. Вулакансем кӳçранах сурĕҫăр, еп çакăнта кăшт та пулин суйнă пулсан. Пĕртте суйман. Тупата! Пĕтĕмпех ҫăн.

Калаçу тĕрмере пулнă. Малти пӳлĕмре. Амăшĕ ывăлĕ патне пынă курăнса калаçма.

Пĕрпĕрне курсанах вĕсем пит савăннă. Амăшĕ хĕпĕртенипе йĕрет. Ывăлĕ те сăмсине нăш-нăш туртса илет. Куççулĕсем кăларса хĕрӳллĕн ҫуп туса илнĕ хыççăн, амăшпе ывăлĕ пĕрпĕрин çумнерех çыпăçса тĕрме сакки çине ларҫĕç.

— Çапла,—тет ывăлĕ.—Килтĕн еппин.

— Килтĕм, Васли,—тет амăшĕ.

— Çапла-а, терĕ тепĕр хут ывăлĕ.

Хăмăр тĕрмен хăмăр çтенисем çинелле, ултан элăк çинелле, кăмака çине, йулашкинҫен хăйĕн сантали (пушмак) çине тинкерсе ҫылайҫҫен пăхкаласа ларнă хыççăн:

— Çапла-а, тесе йаҫĕ те вăл виççĕмĕш хут, вăрăмăн сывласа илҫ³.

Амăшĕ те лаш хуйхăрса, хăйĕн тутăр вĕçĕнҫи шерепиcене пӳрнисемпе сăптăрсэ, йĕри тавралла пăхкаласа илҫĕ.

— Çапла ĕнтĕ,—терĕ те ывăлĕ хыттăн сăмсине шăнкартса.

Кун хыççăн каллех ҫылайҫҫен нимĕн ҫĕнмесĕр ларҫĕç. Шăп.

Йулашкинҫен ывăлĕ каларĕ:

— Хаҫ, анне, курма килнĕ çынсене ĕлĕкхин пек нумай ларттармаççĕ. Курăнса калаçма 20 минутпа çитет, теççĕ. Пит сахал.

— Сахал çав, тет амăшĕ.

— Еп çапла шухăшлатăп. Васили —çирĕм минут калаçнипе сахал. Ех, пурăнăç! Тăван ывăлпа та çителĕклĕ калаçса лармалли çук.

Каллех шăп. Ларсан, ларсан амăшĕ пуçне суллаcа илсе йăвăррăн каларĕ:

— Ну, Васили, кайамха еп еппин.

— Кайах ĕнтĕ, анне, хуллен кайах.

Иккĕш те хăвăрт ура çине тăрса, хуйхăрса илнĕ хыççăн, хĕрӳллĕн ҫуптуса илҫĕç.

Ывăлĕ каларĕ:

— Çапла, еппин. Йурĕ. Иртнĕ çӳренĕ ҫухне кĕрсе тух, анне... Тата мĕн каласшăнҫĕ ха еп? А, акă мĕн: пирĕн кăмакаран хăлĕ те тĕтĕм тухат-и, анне?

— Кăмакаран? Тухат ывăлăм. Мăкăрлансах тухат. Йусаттарăймарăмăр.

— Çапла çав.. Кайах ĕнтĕ, анне.

Амăшпе ывăлĕ пĕрпĕрин çине пăхса савăнҫĕç те, уйăрăлса карĕç.

СОЩҪЕНККĂ.

## Вилĕ пытарни



Тухтăр. Мĕн таваттăр есĕр!

Çынсем. Елĕр çын пытаратпăр. Ват эаттене.

Тухтăр: Мĕншĕн-ха вăл вилнĕ?

Çынсем: Вăл такçантанпах хĕн курса пурăннă.

Тухтăр: Есĕр унăн патне тухтăра ҫĕнни?

Çынсем. Çук, епĕр ăна хамăр çакса вĕлернĕ.

ВЕРХОВ П.

## Комҫăванствă.

— Илтнĕ-и ес хыпар? (Хăлхаран вăрттăн калат). Анҫах кун çенҫен ĕс парттире тăманнисене никама та ан кала.

— Есĕ ху ăçтан пĕлтĕв?

— „Правтă" хаçатра вуларăм.

(КРОКОТИЛ ШУРНАЛТАН).



## Хырӑма ђикекенни пӗри, укҫа тӳлекенни тепри.

Ку ӗҫ хулара пулнӑ тейӗр есӗр. Унта ун пек шулӗксем пулаҫҫӗ. Хулара мар, йалта пулнӑ, ђӑваш йалӗнђех.

Иӑвашкел йалӗнђе (Патӗрйел у.) 1922 мӗш ҫулта Лукка Сахарӑв, йалсовет претҫетаттӗлӗ пулнӑ ђухне, хыснаран Козлов йатлӑ ђухӑн ҫын йађӗпе 3 пӑт ҫурӑ тырӑ илнӗ. Халӗ Кослов йађӗпе, ҫав 1922-мӗш ҫулта илнӗ тырра сирӗн тӳлемелле тесе вулӑсран хут килнӗ. Кословӗ 1920 мӗш ҫултах Хӗрлӗ ҫара кайса хыпарсӑр ҫухалнӑ, тет Венерӑ кореспотент.

Апла пулсан, Лукка Сахарӑв шухӑшӗпе, вӑл тырра вилнӗ ҫын ҫинӗ пулат̆. Вилнӗ ҫынсем тырӑ ҫиме пултараҫҫӗ-и, пултармаҫҫӗ-и. Пултармаҫҫӗ пулсан ҫав Кослов йатлӑ кађаках ҫинӗ ӑна. Ун путеккисем те ҫаплах каласҫӗ.

## Телефон мурӗсем.

Ҫӗнӗ Ахпӳртсем ытла ахӑрса кайнӑ.

Вӑл йал витӗр Кӗҫӗн-Иелђӗкрен Патӑрйелне телефон тухса кайат̆. Ҫав телефон пралукӗсем ҫине кантрасем, ҫӗтӗк-ҫурӑк, тата ытти йапаласем ҫакса пӗтернӗ, тет 9 мӗш вумӗрлӗ кореспогент.

Хӑйсен ухмах пуҫӗсене ҫакса йамани тата телефон пралукӗнђен? Пит кулӑшла пулнӑ пулӗђӗ.

## Лавка-и, хупах-и?

Ҫапла ҫав. Хутарти потребиттӗлсен лавкки лавка-и, хупах-и?

«Унти прикашђӑк лавкарах ӗҫкӗ тӑват. Ерех илекенсем лавкарах ӗҫеҫҫӗ. Тата тавар илме пырсассӑн, прикашђӑкӗ кирлӗ мар таварсене те ирӗксӗрех парса йарат̆. Хӑш ђухне илес килмен ҫӗртенех ҫуттине тыттарса йарат̆».

Аван прикашђӑк. Халӑха ҫуттине ҫутӑлтарасшӑн. Ҫавӑншӑн хӑйне ҫутӑлтарса йамалла пуҫран.

## „Перекет касси",

Укҫава кӗмӗлтен, пӑхӑртан, йе хутран тӑваҫҫӗ. Хутран йе пӑхӑртан тунӑ пулин те вӑл ҫиме йурӑхлӑ пулма пултарат̆.

Паймӑрса ҫырат̆:

«Ҫурхунне ҫулсем, тата кӗперсем йусаса пӗтернӗ хыҫҫӑн, йалсовет претҫетаттӗлӗ тӑрӑшнипе, халӑхпа 8 тенкӗлӗк ытла сушкӑсем, пӗремӗксем ҫисе йарӑ. Халӗ укҫа кирлӗ. Халӑх укҫи ӑҫта? — Хырӑмра», тет. Хырӑм вӑл ҫапла йапала. Пурне те вӑл ҫӑтат̆. Иалти ҫынсен хырӑмӗсемпе претҫетаттӗл хырӑмӗ пӗрлешсен, пӗрлешӳллӗ хырӑм пулат̆ те, вара ҫав пӗрлешӳллӗ хырӑма тӑрантарма укҫа ытла та нумай кирлӗ пулат̆.

## Йунлӑ ҫапӑҫу.

Ҫулавӑҫ ађи ҫырат̆:

«Ҫулав йалӗнђи (Елӗк вул.) ђиркӳре манашкӑллӑ Аннапа проҫвир майри Катренккӑ тавлашса кайнӑ.

— Ес паттентсӑр проҫвир сутма пултараймастӑн, тенӗ Катренккӑ Аннана. Анна: Ман проҫвир савђен тусӑрах, тесе Катренккин пӳрнине ҫыртса татнӑ. Вара Анна ирӗксӗрех йунлӑ пӳрнине йухтарса килнелле кайнӑ», тет.

Пӳрнесӗр мӗнле проҫвир пӗҫерӗ ӗнтӗ вӑл? Шеђ майра инкене. Ун йунӗсем

проçвир пĕçерпĕ çĕрe кайсан, турă йунĕ вырăнне пулаççĕ. „Кетренкке проçвирне ăша илĕр, унăн пўрнинчен йухакан йунне сыпăр!“.

### Вĕçен кайăксем.

Çўлги вĕçен кайăксем акмаççĕ те, вырмаççĕ те, хаçат та вуламаççĕ. Хумпуç-Патăрйел вулăсĕнчи Кăшмаш Туçи çынисем акассине акаççĕ те, вырассине те выраççĕ, хаçат анчах вуламаççĕ.

В. Михайлăв çырать:

«Кăмаш-Туçи хресченĕсем нимĕнле хаçат та çыранса илмеççĕ. Хамăрăн чăваш чĕлхипе тухакан хаçата та вуламаççĕ», тет.

Чăваш чĕлхипе тухакан хаçата вуламаççĕ пулсан, чăваш чĕлхипе тухакан «Капкăна» вулаттарас. Ку нумĕра таçтан тупса та пулин уласса шанатпăр. „Капкăн“ ораккулĕ пире ун çинчен пĕлтерчĕ. Вăл суйакан марччĕ.

### Сызатаççĕ

Сĕнтĕр-Вăрринче прийомнăй покхойа кайас пулсан, пуçу ыратсан вар ыратать темелле, кĕçĕ тухсан куç ыратать теме йурать. Мĕншĕн тесен: «Çав прийомнăй покхойра ларакан лекĕрсем сывмар çынна пăхса памаççĕ, чирне пĕлмесĕрех рецепт çырса параççĕ. Хăш чух аптекрен çав рецепсемпе тута пăсăлсан куç емелĕ парса йанисем те пулнă».

### Паллама çук.

Сасартăках çынна вăл мĕнле çын иккенне ăçтан сисен? Тукаш йалĕнчи (Хутар в.) Микиш Хветĕрне те никам та партти кăвтитачĕ тесе калас çук: ĕçсе çўрет, çынсемпе харкашать. Ăна парттире тăнине никам та пĕлмен. Пĕрре ĕçсе ĕсĕрĕлсен вăл пĕве панче йăваланса выртнă чух, иртсе кайакан çынсене: епĕ кам, епĕ кăнтитат, тесе акăрашса илет.

Темĕн, Хветĕр, суйĕçтерегĕн пулĕ. Сăнаса пăхас пулать.

### Вĕри пуç.

Кăçĕн Йĕчĕкрен çыраççĕ. „Пирĕн йалсовет çекреттарĕ Мулла (?) Мишши йулашки вăхăтра пуçне ысăка хура пуçларĕ. Авкустăн 25 ш числи́че пухури халăха ĕç çинчен каласа парас вырăнне, епĕ ĕçлонине тиркесен хăвăр ĕçлĕр, тесе папкине çĕклесе çапрĕ, алă чăмăрккипе сĕтеле шаккать.

Вăл «çăмăл ăсли» паллах та, паппăпа сĕтел мĕнтен айăплă-ши?

### Ӳссĕрпе.

У-у-у-х! Пĕтерет вăл ĕçкĕ! Маçе кăна калана ун çинчен,—пăрахаймаççĕ çавăна хăшĕ пĕри. Акă пăхăр-ха.

„Хутар вулăсĕнчи (Иет. у.) Хвершăл Антрей Ваççилчă пĕрре ÿсĕрпе пĕр сывмар çынна йăнăш емел парса йанă. Иурать ха лешĕ ĕçмен, ĕçнĕ пулсан тем курнă пулĕччĕ. Тепĕр ирхине ÿсĕртен уралсан хвершăл хăй йăнăшпа панă емелне пырса калла илсе кайнă“.

Хăйне ÿсĕртен çăлма емел тупаймасть пулать. Начар хвершăл!..

### Усал Иоççăф.

Ĕлĕкхи Иаккăвăн Иоççăф йатлă ывăлне пит йăваш течĕç. Пĕрре ăна патша арăмĕ хăйпе выртма чĕнсен те, вăл ун патне кайма хăйайман, тесе çырнă «çветтуй» кĕнеке çинче. Хутар вулăсĕнчи Иоççăф «аташне» пăхман пулас, вăл пит хăрушă калаçать вара.

„Ун патне пушта (вăл пуштăра та ĕçлет, пулăшу комиттетĕнче те ĕçлет, тата ытти çĕрте те ĕçлет, пĕр сăмахпа каласан пит «ĕçчен» йапала) хаçатсем илме пырсан хăйĕн хăрушă сассипе акăрашса хăратса пĕтерет. Мĕн килĕ сана, пайан мана апат тума памастăр, тесе акăрашать вара вăл. Хăш чух памасăрах урăх çĕре тухса кайать.

Самана улшăннă майĕпе çав Иоççăфа та улăштарасси паллах.

## Тутлă ыйхă.

Шурча вулăсĕнчи Тăрăнтан çырса пĕлтереççĕ:

„Капкăн“ хуçи, тархасшăн пирĕн комсомол йачейккине килсе вăрат. Халăх хушшинче нимĕн те ĕçлемеççĕ. Хăйсем ни пуху тумаççĕ, ни кĕнеке тавра пулмаççĕ. Ес вăратмасăр вăранас çук“.

Мĕн тума вăратас? Çывăрса тăранччăр-иç. Ырă каç пултăр, йачейккă. Сана тата акă мĕн сунатпăр—укомолта ĕçлекен пĕрпĕр çынна курмалла пултăр, анчах тĕлĕкре [мар], чĕрĕллех курмалла пултăр.

## Лаптӑлла выҫӑнӑ ҫухне.



— Меҫҫӗкӗ унгах выртать. Мӗвле кураймастӑн? Суккӑрлантӑни мӗн. Кӑҫал присӑва каймалла мар пуҫҫке санӑн?

## Майсӑр телопроисвотиттӗл.

Майсӑр ҫынна кушак пӑхма та йураман, теҫҫӗ; кушак пӑхма мар, телопроисвотиттӗл пулма та йурамасть иккен.

Ассакасси вулӑсӗнҫе пурнакан страххової акӗнтӑн телопроисвотиттӗлӗ Николай Прохоҫкин Куракш йалӗнҫи Евтокин Улпутӑвран лаша страххоӑвать тума 10 тенкӗ илнӗ укҫаран 4 тенкӗ те 28 пусне хӑй кӑсйине ҫикне. Укҫине пар тесен, еп ун ҫуртне ирӗклӗн страххоӑвать турӑм вӑл укҫапа, тесе суйать. Хӑй страхоӑвать туман, тет Антихрист йатлӑ корессотент.

Пӗҫӗк ҫын ӗнтӗ телопроисвотиттӗл. Ҫын укҫине кӑсйине ҫикме пултарнӑ. Кӗҫӗн пуҫа ҫарайманскер, аслӑ пуҫ пулсан мӗн хӑтланӗ вӑл. Ун ҫухне вара арҫипех йӑтса кайӗ страккантурӑн укҫине.

## «Спонпа комонес».

Ҫӗнӗ сӑмахсем хутшӑнсах пыраҫҫӗ, ҫавӑнпа „спонпа комонес“ мӗн иккен не пӗлмен ҫын нумай пулмалла. Пирӗнтен ыйтаҫҫӗ:

„Иетӗрне Уӗҫтӑвком вулӑссене тӗрлӗ ҫветенисем йамалли формӑсене йанӑ. Ҫав нумай ҫветенисем хушшинҫе „спонпа комонес“ ҫинҫен те ҫветени ыйтаҫҫӗ Вулӑсрисем ерне шухӑшласа та вӑл сӑмахсем мӗне пӗлтернине ӑнланаймарӗҫ Ҫветени йамалла, мӗн ҫинҫенне пӗлместпӗр. Ӑнлантарса парсамҫӗ „Капкӑн“ тархасшӑн турӑ пулса. Ҫук, турӑ пулсан та пултараймастпӑрах. „Спон“ вӑл „звон“ тенӗ сӑмахран пулмалла. Пуҫра пушӑ ҫух пуҫ кашлани пуҫ вӑл. „Комонес“—„кому нет места“ тенӗрен пулмалла. Ҫапла вара пӗтӗмӗшпе вуласан „пуҫсӑр ҫынсене Совет уҫрешенинҫе вырӑн ҫук“ тени пулать пулмалла Ҫапла пуҫ, Йетӗрне Уӗҫтӑвкомӗ? Ие урӑхларах и? Ӑнлантарса пар еппин вулӗҫтӑвкомсене.

# Хăлха.

Çентăпĕрĕн 3 мĕш кунĕ. Ирхине ирех вырăн çинче ыранхи сопранире отчот тăвасси çинчен шухăшласа выртатăп. Сасартăк кантăка: Шан! шан! шан! тутарчĕç. Хăранипе, айалти кĕпе йĕмпех йăштах вырăн çинчен сиксе тăрса чӳрече патне чупса пытăм та, урамалла пăхрăм. Урамра хамăр вулăсри ассă милитсионерпа йал çынни Насар Хветулч тăраççĕ. Милитсионера курсанах чĕрем кăлт! турĕ те хăранипе: мĕн пулнă? тесе ыйтрăм. Милитсионер мана тула тухма чĕнчĕ. Тухрăм, хăрахăрах.

— Мĕн пулнă? тетĕп каллах. Милитсионер мана симĕс хутпа чĕркенĕ йапала парчĕ те:

— Уçса пăх та, ăта, терĕ. Хăра-хăрах уçса пăхап та тĕлĕнсех кайатăп. Хут варринче такам телейсĕр етеммин çур хăлхи!

— Ара, ку мĕнле йапала, кам хăлхи ку, тесе ыйтрăм.

— Кам хăлхине хамăр та пĕлейместпĕр. Çăркаç Насар Хветулч картине темле йĕкĕтсем панулми вăрлама кĕнĕ те, Насар Хветулч тытса хăлхине çыртса татса йулнă. Çынвисем тарнă, паллаттарман, терĕ милитсионер. Камăн хăлхи çуккине анаталла шыраса антăмăр. Тукташ йалĕ пĕчĕк мар вĕт, шырамаллăх пур. Кашни кантăкранах сан хăлху тĕрĕсри, тесе ыйтса Урлух Хĕлĕпсен кантăкне çитрĕмĕр.

— Хĕлĕп пури, тесе ыйтрăмăр та, Хĕлĕп тĕлне вихăшĕ те пĕлмеççĕ. Ахăр ку кун хăлхи пулĕ ха, тесе пăшăлтатрĕ милитсионер ман хăлхаран. Чăнахах та кунăнах пулĕ. Кун пек йашă Тукташра урăх çук та ĕнтĕ. Йалти çынсемпе ăçта кирлĕ унта çапăçса çӳрет. Нумайăх та пулмасть Хĕлĕп хамăр йалти хусах арăма—Макар Маркиве ӳсĕрпе, çĕрле, алăк çĕмĕрсе кĕрсе хĕнесе тухнă. Вăлах вăлах. Кăнтăрла килĕпĕр, терĕ ман милитсионер. Кăнтăрла çитрĕ Хĕлĕпсен кантăкне пырса шаккарăмăр.

Кантăк витĕр Хĕлĕп пуçне кăтартрĕ. Сылтăм хăлхи çиве вăрăм çӳçне антарса йанă. Хăй кĕл пек шаптурă.

— Сылтăм хăлху çинчи çӳçне йăтха, терĕ милитсионер. Хĕлĕп çӳçне йăтрĕ те, çур хăлхи çук.

# Хĕрлĕ ĕне.

Етем те чейе те,
Вычăхран та чейсем пур,
Авă Çемен пиччен хĕрл ĕни
Ĕнесене ĕмме вĕреннĕ мур.
Хирте курăк çук пек, хăйамат!
Кĕтӳри ĕнесене кунĕ-кунĕпе
Пăлхатса çӳрет пĕтĕмпе.
Ĕнесем пурте пĕр ăсла мар:

Пĕри, парăнмасăр,

Хĕрлĕ ĕнене мăйракапа
Чышса йарать çиллипе,

Тепри, пĕр хускалмасăр,

Канса çеç тăрать хăйне ĕмнипе.

Ăшă сĕт техĕмĕ

Хĕрлĕ ĕнене сипе килет пулас:
Кĕтĕве тухнăранпа вăл
Мăнтăрланса, йакалса карĕ.

Авчах,

Мăнтăрлăхĕ унăн нумайа пымарĕ,—
Авă сăмсалăх тăхăнтартса йачĕç хăйхине
Ахаллине те мар—шăртлине.

Сăмсалăхпа вăл
Ĕнесен çывăхне те пыраймасть.
Курăк çиме вĕренменскер
Курăкпа та транаймасть
Çапла вара хĕрл-ĕне
Ытисене ĕмейми пулчĕ,
Кĕркуннеччен мĕскĕнĕн
Тирĕпе шăмми çеç йулчĕ.

———

Кăташри Васка пула
Те сăмсалăх тăхăнтартнă,
Те курман кувне кăтартнă:
Апат çиейми пулнă:
Ырханпа вуçĕсем аеса ларнă хăйĕн.
Пулас куп-,улĕ шутлă пуч çав мĕскĕнĕн.

---

Авă йапала! тĕлĕнмелле. Каçса йатарласах пĕр виç-тăват çын чӳречинчен пыра пыра итлетĕп. Кашни пӳртрех Хĕвĕл хăлхи çукки çинчен пуплеççĕ.

Ай, ай, маттур, маттур!..

П—ТАН.

# Пуҫа килнӗ шухӑшсем.

Тирпейлӗх решимне астуса, вырӑс майрисем тӑвӑр, кӗске сарапписем тӑхӑнма пуҫларӗҫ, ҫӗнаш арӑмӗсем хушпу тӑхӑнма пӑрахрӗҫ.

———

Ерех илнӗ ҫухне ҫеретре ывӑнаҫҫенех тӑмалла пулсан ан хуйхӑр. Ерехне ӗҫсен те вырӑса канӑн.

———

Тавар хакӗсем хӑпарса пынӑ ҫухне, сӑмассем усӑнсах пыраҫҫӗ.

———

Ҫын ӗҫлеме пултарайманнине кассӑна лайӑхрах ревиҫи тусан пӗлме пулать.

———

Ҫынна ним каласа та ҫӗнтерейменсен, маттершҫинӑ каласа та пулин ҫӗнтерме пулать.

———

Пуҫлӑхпа пӗрле коопературиви тавара вӗрлакан вӑрӑ шутне кӗмест.

———

Растратҫӑк та хӑш ҫухне, тӗрмере ларас вырӑнне, урӑх кооперативва куҫать.

———

Пиҫетлесе кӑларнӑ хӑш хӑш отҫотсемпе кулаҫӑ ҫаркама лайӑх.

———

Хаҫата пӗтӗмпех вуласа тухакансем сахал, хӑйсем ҫинҫен ҫырнисене пурте вулаҫҫӗ вара.

———

Вӑрманне вӑрласа кайсан та, леҫниҫҫӗстви тӑрса йулать.

———

Салтака кайас умӗн суккӑрланакансем ҫылай пулаҫҫӗ.

———

Пур ҫӗрте те хаҫ ҫӗнӗ виҫесем. Аршӑк вырӑнне—метр, кӗренкке вырӑнне—килограм, путылккӑ вырӑнне—ҫетвӗрт.

———

Авланнӑ ҫухне Сакӑса арӑмупа уйӑрӑлнӑ ҫухне тӳлемелли укҫана та тӳлесе хӑвар,—вара арӑмупа уйӑрлас шухӑш кӗнӗ кун укҫасӑр вӑхӑтра пулсан та, ҫынтан кивҫене кӗмесӗрех уйӑрӑлма пултаратӑн.

———

Портфӗлсӗр ҫын тараса ҫинҫе те сахалрах туртать.

Атминистратси кӑмӑлне кайас тесе, месткомпа йатлаҫма та йурать. Анҫах иккӗшӗнпе те лайӑх пурӑнсан тата лайӑхрах.

———

Сан вырӑна йышӑнас текенсем нумайӑшне кирек хӑҫан та асрах тытса пурӑн.

———

Сана телӗр ҫын кӳрентерсен, ҫтена хаҫаҫӗ ҫине, вӑл ӗҫет, тесе ҫыр. Суйса ҫырнӑ тесе сута парсан та, сана айӑплаймӗҫ, мӗншӗн тесен ӗҫмесӗр никам та пурӑнаймасть.

———

Вуламалли ҫурта хӑш ҫухне кӗнеке вулама йуратман ҫынсем те пухӑнма пултараҫҫӗ. Кӗнеке вулас вырӑнне вӗсем хӗрсемпе выҫҫаса лараҫҫӗ.

## Ҫипер аҫа.



— Аҫам, мӗншӗн сӑмсуна тасатмастӑн? Аҫи ҫипер те, сӑмси пыҫҫӑклӑ, тейӗҫ. Капла килӗшмест.

—Сӑмса пыҫҫӑклӑ пулни нимех темар. Сӑмса айӗнҫи курӑнмасть, теҫҫӗ пур пӗрех.

# „КАПКĂН“ МУҪЕЙӖ.

Малалла ҷăваш хушшинҷи мӗн пур паллă йапаласене „Капкăн“ муҫейне хурса пырас тетпӗр. Кам курас килӗ—пурте «Капкăна» ҫырăнса илекенсем укҫасăрах ăна кӗрсе курма пултараҫҫӗ.

Акă пуҫлар ха муҫейе курма.

## 1. Туслашнă



Ҫак саппун питӗ паллă. Ăна ăрамра тупнă. Мӗнле туслашнă теттӗр-ха есӗр вăл ҫак кӗленҷепе? Кӗленҷине ҫăтăр-ҫăтăр ыталаса выртнă. Мӗнле туслашни ҫинҷен хуҫи хăйех «Капкăна“ рапăрт парса систерессе кӗтер ха.

## 2. Вӗрентӳҫ витри.




Кам витри теттӗр ҫакна? Тупата торшăн та, ку витре Шӗверпуҫ вулăсӗнҷи (Шупашкар у.) Ҷăрăш Туҫа шкулӗнҷи М. Оҫиппăва йатлă майра уҷитлӗн.

Витрине пурте пallаҫҫӗ. Сăра суттине хăнана ҫӳрес ӗҫ—шкулта вӗрентсе ларнинҷен усăллăрах, тупăшлăрах, тесе калаҫҫӗ, тет. Ҫак витришӗн пӗр уйăх хушшинҷе аҷасене 3 кун ҫеҫ вӗрентнӗ. Ҫавăнпа та тахҫанах муҫейе хума тивнӗ те, хуратпăр.

## 3. Паллă портфӗл.



Портфӗл тӗрлӗ ӗҫе йурăхлă: кӗнекехутсем ҷиксе ҫӳремелли, мунҷана каймалли, вырăна кӗнине те «портфӗл илнӗ“ теҫҫӗ. Ку муҫейри вара ҷи ҷапли, ҷи паллă портфӗл. Ăна мӗн пур пивной хуҫисем паллаҫҫӗ. Вăл пивнойсенҷен пиҷки-пиҷкипех хваттерелле сăра шутарать.

## 4. «Йалккас».



Ку „йалккас“—ҷăваш шлепки. Мӗн йатлаҫтарнă пулӗ ку шлепке мăнă, ҫӳлӗ вырăнта ларакансенех. Ахалрен мар ҫавă вăл ҫӗнӗ ҫӗре куҫас текенсен телекаҷӗн пуҫӗ ҫинҷен анмасть. «Йалккас» 20 хут Шупашкара ҫитсе те Шупашкарти уҷрештенисен сӗтелли умне тайăлса та ӗҫӗн вӗҫӗ хӗррине тупайман.

## 5. «Пукаҷ».



Ку пăшалпа ҫпектаккăл вăхăтӗнҷе пӗр ҷаплă арттис, хăйне йуратманшăн уҷиттăлнитсăна персе хăлхасăр тунă. Хăйех „Капкăна“ килсе—вăл кайăк епӗ тессӗн туйăнать. Ҫавăнпа та йатне каламастпăр. Муҫейне хăй аллипе хăй хушаматне тата ӗҫне тӗплӗ ҫутатса йамасассăн сăмсине татса илсе муҫейе хуратпăр.

# Йĕпе çанталăк çинчен.

Тирпейлĕх решимне аса илсе, епĕ, мĕнле майпа, мĕн чухлĕ сĕтĕрĕнсе çÿресе хам ыйтнисе хирĕç калаттарса çÿрени çинчен çырса хут сайа йарас мар, терĕм. Тÿрех тапратам.

Кашни çыннах çак ыйтува хирĕç калама ыйтса çÿрерĕм:

— Çанталăк йĕпе пулни çинчен мĕн калама пултараттăр есĕр?

Мана хирĕç çакăн пек çавăрса калаканসем пулчĕç:

## Кахал çын.

— Кăçал уй ĕçĕсене пуçтарма аван пулчĕ. Пит аван. Кун пек пулассине кĕтменчĕ. Пĕр сехет вырсассăн, çăмăр шарлаттарсах çума тапратать те, пĕр сехетлĕх канма выртатăп. Канса ывăнсан каллех канма выртатăп. Выртса ывăнсан, канма выртатăп. Улпут пурнăçĕ! Хĕлле те çавăн пек çил-тăман пулсан, вугă шанкă патне кайас хуйхи çук.

## Улпутла пуçлăх.

— Çанталăк йĕпе майĕпе, пĕрик чалăш каймалла пулсан та, лашапах çÿретĕп. Ку аван. Анчах, çанталăк пирки еп ресолутси хурса парассине темиçешер кун ÿрештени умĕнче кĕтсе тăракансем сахалланчĕç. Каплах пулсан, ман ÿрештенийĕ хисеплеме пăрахĕç. Кÿрĕрха исхотăшчи! Миçемĕш нумĕрпа йаратпăрха ку хута. Аха! № 33,333. Йĕпе пулман пулсан 50,000 çитеретĕмĕрчĕ. Сайавленисемпе килекенсем сахалланчĕç. Ах, ку йĕпе сăмсаллă çанталăка!..

## Усламçă.

— Йĕпе пулнă пирки нумайĕш пасара çÿреймерĕç. Претçетаттĕлĕ пырне йĕпетме йуратнă пирки, кооператтив хупăнчĕ. Тавар нумай кайать. Йĕпере таварсем пĕлтĕрхин пек, типмеççĕ,— шÿсе нумай тургакан пулса кайаççĕ. Çийĕнчен тата таварсене йĕпететпĕр. Ма йĕпететтĕр тесен, йĕпе тивнĕ тетпĕр. Мухтав турра йĕпе çанталăк туса панăшăн. Куншăн манран çурта лартма та шел мар.

## Хула майри.

— Йĕпе çанталăк пулнă пирки çуркуне илнĕ авган хÿриллĕ шлепкеме тăхăнса тухаймарăм. Шлепке илни ахаллех пулчĕ.

## Профсойусра ĕçлекен.

— Йĕпе çанталăк пулнă пирки сийен курнисене пулăшмалла пулчĕ-и мĕн? Пулăшмалла пулсан халех чиркуçарсем йарас. Чиркуçарсем йама епĕр йурататтпăр.

## Ӳсĕрĕлсе çÿрекен çын.

— Епĕр, ĕлĕкех пырсене йĕпетме вĕреннĕскерсем, йĕпе çанталăкран хăрамастпăр.

## Ватă мучи.

— Кăçал çăмăр ĕлĕкхи пек çурĕ. Авалхи самана çаврăнса килет пуль.

## Вăрă.

— Йĕпе, тĕттĕм каç çын йапалисене вăрлама лайăх.

## Халь анчах кореспотента кĕнĕ ача.

— Çанталăк йĕпе пулни çинчен хаçата çырса пама пит лайăх пулчĕ. Кашни ернерех çăмăр çуни çинчен çырса тăратăп. Темме çапăнаймарĕха,—кăмпа нумай пулни çинчен çыраси мĕн.

## Çул-кĕпер тăвакан технĕк.

— Çулсене пĕлтĕр анчах чул сарса тухрăмăр. Çанталăк йĕпе пулнă пирки пур-пĕрех çĕмрĕлсе пĕтрĕç. Хăшĕ-хăшĕ чĕркуççи таран пылчăк ăшне кĕрсе лараççĕ. Каплах пулсан, епĕ начар техвĕкне кирек кам та пĕлме пултарать.

ИАВАН—МУЧИ.

# Пĕҫĕк калаҫусем.

## Сысна сутти.



Хресҫен: Мĕн ҫул тăрат ку сысна?
Сысна хуҫи: Пилĕк тенкĕ тăрат.
Хресҫен: Питĕ хăрăк ҫке ку сысна, ма хă хаклă ыйтан?
Сысна хуҫи: Вăл сысна ҫул ҫирлесен есĕ ху та хăрса кайăн.

ВЕРХОВ П.

## Ҫейе ҫын.

«Венетси» текекен столовăйа пĕр усламҫă йевĕрлĕ кĕрнеклĕ ҫын пырса кĕрет. Кĕрет те пĕр уйрăм ларакан сĕтел хушшине кĕрсе ларат. Шаккат офитсианта.

— Ей, кил-ха кунта, пĕрре апат ҫиме мисе пус тăрат сирĕн?

— 70 пус анҫах. Шўрпине те паратпăр, катлетне те паратпăр, ҫăкăрĕ те ҫителĕклĕ.

— Ҫăкăрĕ мĕн ҫул тăрат?

— Ҫăкăрне ахалех паратпăр.

Шўрпишĕн мĕн ҫул тўлемелле?

— Шўрпи те ахалех пулат вара.

— Апла пулсан мана шўрпипе ҫăкăрне анҫах пар.

## Кайăк йашки.

— Пайан анне йаска ҫине вăтăр кайăк йарса пĕшерне.

— Мĕнле вăтăр кайăк пĕр хурана кĕтĕр.

— Вăн, лес пўртре ш(с)ĕрлекенсем—сăнасем вăтăр кĕрсе ўкнĕ хуран ҫине.

## Иурăхсăр макаҫăн.

— Васли, шкулта вĕренмелли кĕнекесене ку макаҫăнта ан ил.

— Ма тата?

— Епĕ пĕлтĕр кĕнекесене вăл макаҫăнтан илнĕҫĕ те, ексамĕн тытаймарăм. Пур претметшăн йетинитсă лартса тултарҫĕҫ.

## Кĕнекесем куҫаракан.

(Вĕреннĕ ҫынсен калаҫувĕ).

— Мĕн ĕҫлесе пурăнатăн хаҫ есĕ?

— Кĕнекесем куҫаратăп.

Вырăсларан ҫавашлаи?

— Мĕнле вырăсларан. Вырăсларан мар, хамăн кĕнекесене пĕр ҫĕртен тепĕр ҫĕре куҫаратăп.

## Ăслă аҫа.

— Аҫам, ма йĕрен? Ĕҫлес килмести мĕн?

— Ĕҫлес килменшĕн мар. Аттесем калаҫҫĕ: йĕре-йĕре ĕҫлекен кула-кула ҫийет, теҫҫĕ. Манăн та кула-кула ҫийес килет.

---

## Ҫĕр виҫнĕ хыҫҫăн.



— Атте, пăхха Пракух Муҫи ҫĕр валеҫвĕ ҫĕртен килет.

— Лайăх ҫĕр илнĕ те ӗнтĕ вăл ҫĕрне ик аллипех ҫавăрса тытнă. Никама та парасшăн мар.

Урхамак

# КОРЕСПОТЕНТСЕНЕ.

— Саркайăка. Савăн:

„Аллилуйăн аллли пур,
Помилуйăн пўрни пур,
Пирĕн пупăн тăнĕ пур,
Тийеҫукăн ăсĕ пур“

тенĕ ҫтихсем аван та, анҫах малалла ҫырнисем наҫартарах вэра. Кĕреймерĕ Ṫатах ҫыр.

— Ама йăтта. Есĕ ҫыратăн: „Лаврен Саҫкки хĕр пуҫăн ывăл аҫа туса паҫĕ. Иал ҫыннисем тĕлĕнеҫҫĕ“ тетĕн. Хĕр аҫа ҫуратма пултарнинҫ н мĕн тĕлĕнмелле, арҫын ҫуратнă пулсан, тĕлĕнмеллех пулаṫ вэра. Кĕреймерĕ

— Миṫука. Аҫу «Капкăн» илсе паманни ҫинҫен ҫырни кĕреймерĕ. Илсе памасṫ пулсан, макăр. Макăрсан илсе парĕ.

— Кĕске Кĕркурийе Ҫăлах Мĕтрин сурăхĕ ҫухални ҫинҫен ҫырса хут сайа ан йар. Сурăхĕ мар, арăмĕ уйрăлса кайсан та пирĕн ĕҫ ҫук унта.

— Иуманккайа. Кăвак сысна мăйкăҫипе картана ҫаклавни ҫинҫен ҫырни те кирлĕ мар.

— Кришшана. „Капкăн“ 10 пус текĕрен есĕ 10 пус йанă та, анҫах пирĕн шутпа мар. 10 пус тесэ епĕр „10 копейкка“ калатпăр, сирĕн патра 10 пус тесе „3 пуса какаҫҫĕ. „35 пус“ йамалла пулнăҫҫĕ (сирĕн шутпа).

— Пур „кореспотентсене те. „Капкăн“ потписҫĕксем тупрăр и? Ҫырса пĕлтерĕр.

— Веескел—„Хресҫенсэмпе ҫамрăксем каласнинҫен“, Тылă.—„Маткине хĕвет“, Ҫўлмек—„Ҫасовой тĕленни“, Пашур—„Халапҫăсем“, Куракан—„Ивĕ уралла ват така“, Вăлта—„Йумăҫ патĕвҫе“, Вĕтĕ ҫул—„Вăрттăн ĕҫ“ Поппов—„Анкеттă“ — „Капкăн“ вэҫҫи ҫырнисем „Капкăна“ йурăхлă пулаймарĕҫ.

## „Капкăнăн“ 13-мĕш нумĕрĕнҫи сатаҫҫăн туппи.

| | | |
|---|---|---|
| 1 | 8 | 3 |
| 6 | 4 | 2 |
| 5 | 0 | 7 |

Туппине тупакансем ҫаксем: Римов, (Тĕп архив). Топрынин (Сĕнтĕр вул.), Иванов Ҫеркей (Шупашкар), Ҫемăнăв (Шупашкар милитси), Краҫҫилниккăв, Фетоттăв (Финанс Комиссарнаҫĕ).

Ответ. редактор А. Золотов.

„Капкăна“ йуратакансем!

„КАПКĂН“ шурнала САРМА тăрăшăр!

Ҫулталăклăх 200 потписҫĕк тупакансене

ПУРНЕ ТЕ ПĔР ПЛУК

ПАРАТПĂР.

Потискkă тупакансене парас тесе 100 ПЛУК хатĕрлерĕмĕр.

Чувашлит № 916. Чебоксары, тип. „Чувашская Книга“.